**Районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕнче хĕрарăм ĕçĕ те пĕлтерĕшлĕ вырăнта**

# Ăшă кулă – малашлăха чĕнекен çуллахи илем

"Телей тĕнчи инçетре", – теççĕ те халăхăн çак каларăшĕ кирек-кама та самантрах шухăша ярать. Чăнах та



В. Б. Петрова.

инçетре-ши вăл? Ку ыйту çине пурнăç юхăмне юратнă ĕçпе тултарнă çын çеç туллин те тĕрĕс хуравлайрать тесе шутлатăп. Телей тĕнчи ĕçпе çеç çывăхланнине паянхи сăн ӳкерчĕксенчи хĕрарăмсемпе пикесен ăшă кулли çирĕплетет. Çапла, юратнă ĕç хăйех телей çăл куçĕ. Апла пулсан телейлĕ пулма хăв суйласа илнĕ ĕçре çанă тавăрса ĕçлемелле кăна. Ун чухне çемьери килĕшӳ те, юлташусемпе пĕр чĕлхе тупни те аталану çулĕпе малтан-мала илсе кайĕç.

Çут çанталăкра ку вăхăтра темĕнле асамлă вăя кĕтнĕ туйăм хуçаланать. Хĕл вăхăтĕнчи тарăн ыйхăран вăраннă çĕр çинче вăхăтра акса хăварнă пĕрчĕ таса та ачаш хунав пулса шăтса тухса паян шăркана ларчĕ. Хирсенче çĕнĕ тырă пучаххи хĕвелпе вăйă вылять, улăхра чылай çĕкленнĕ каю курăкĕ хумханса çĕр ĕçченне саламлать, шкул çумĕнчи вăтă йăмра çил сассине итлесе каникулти ачасемпе вĕсен ашшĕ-



О. П. Николаева.

амăшĕсемпе тата вĕрентекенĕсемпе шăппăн калаçать, çывăх кӳлĕре вара хуллен чупакан хумсемпе кĕрешсе-ăмăртса шурă чарлан шыва чăмса пулă тытать. Çак илемпе тулнă ăшă туйăм этем чунĕнче пытанса пурăнать-пурăнать те, анчах çу кунĕсем çитнĕ май ăна епле пытарас тесен те хĕвре тытаймастăн – çут çанталăк хăйĕннех тăвать. Чĕрĕлӳ тапхăрĕнче вара вăл пушшех те аталанма тытăнать, каярах чун-чĕрере çирĕп юрату тымарĕ ярса вут-хĕммĕн ялкăшма пуçлать.

Утă уйăхĕн кунĕсем пĕтĕм тĕнче ыйхăран вăранса çитнĕ тата пĕрлехи вăй-халпа пурте çитес хĕле хатĕрленнĕ тапхăрпа тӳр килни хĕрарăм илемне татах та çӳлерех çĕклет, ăна хаклама пĕлекенсене экономика аталанăвне сулмаклă утăмсемпе малалла уттарма йыхравлать. Урăхла еплеха, пĕтĕм ӳсĕме илем никĕслет-çке. Хĕрарăмăн черченкĕ те ăшă кулли вара ки-

рек епле ĕçре те çĕнтерӳ пуçламăшĕ. Çакăн çине паян Калайкассинчи вăтам шкулта ют çĕршыв чĕлхине вĕрентекен Ольга Петровна Николаевапа çак шкул директорĕн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ Ильза Анатольевна Григорьева пĕр майлă хурав памаççех пулĕ тетĕп, анчах эпир, арçынсем, вĕсен хăйсен ĕç юратăвĕпе тулнă куллисене малашлăха чĕнекен çуллахи илем тесе хаклатпăр.

– Ачасен характерĕсем улшăнчĕç. Питĕ уçăмлă халĕ вĕсем. Аслăрах классенчисем уйрăмах. Вĕсем хăйсен шухăшĕсене тӳрремĕн те уçăмлăн калаççĕ: мĕн килĕшет, мĕн килĕшмест – пытармаççĕ яшсемпе хĕрсем. Çавăнпа вĕсемпе калаçма та килĕшӳллĕ, ĕçлеме те çăмăл, – терĕç вĕрентекенсем пĕр сăмахпа калаçнă пек çуллахи каникула кайнă ачасем шкул картишнелле ĕçпе кану лагерьне шăкăл-шăкăл калаçса утнине кăмăллă тинкерсе.



С.П. Захарова.

Вĕрентекенсем ачасемпе пĕр чĕлхе тупни икĕ еншĕн те усăллă пулни пирки вара иккĕленӳ çук. Çапла пултăрччĕ те. Çакă тĕреклĕ малашлăх никĕсĕ пулнине кашниех ăнланатпăр.

– Пурнăç пĕр вырăнта тă-



И. А. Григорьева.

манни паян пирĕнтен кашнинех çула чĕнет, çĕнĕ пĕлӳпе те ĕç опычĕпе вăйланма, сумлă аталану технологийĕсене алла илме йыхравлать. Апла-и, каплаи, анчах çĕннине алла илес тесен çиччĕ виççе пĕрре кас та хăвăртрах çула васка. Кунта вара эпир районти ĕç çыннисене пĕр чăрмав та тумастпăр, çула тирпейлĕн



А.В. Васильева.

ăсатса çитес çĕре вăхăтра çитерме тăрăшатпăр. Автобус водителĕсем те пĕр çын пек шăкăл-шăкăл ĕçлени пирĕн тăрăшуллăха тӳрре кăларать, – тет çуллахи илем çынсен сăнĕсенче вылляни кăмăллă ӳкерчĕк пулнине тата вăл ытти çынсен кăмăлĕсене те вырнаçнине, кун пек çынсемпе хутшăнма тата вĕсен сăпайлă ыйтăвĕсене тивĕçтерме те кăмăллă пулнине палăртса "АвтоВАС" уçă акционерлă обществăн Муркашри автостанцийĕнче 20 çула яхăн ĕçлекен билет сутакан аслă кассир Раиса Семеновна Сорокина.

Урамра хаваслă çу кунĕсем. Янкăр каçри çăлтăрлă тӳпе айĕнче е сар хĕвел çутинче мĕн палăртни пурнăçланнишĕн савăнса малашлăх ĕмĕчĕпе тулнă çĕршер савăнăçлă куç... Пурнăç малалла пырать, аталанать, çĕнĕ ӳсĕме çĕкленет. Муркаш районĕ те çакăнтан хыçала юлмасăр ĕçлет, хăй ĕçĕпе ыттисемшĕн тĕслĕхе тухать. Çакăнта Муркаш енре пурăнакан, ĕçĕпе илемлĕ ĕçчен чăваш хĕрарăмĕн тӳпи те çук мар. Ку сăмахсене каланă май район аталанăвне хăйсен ĕçĕсенче вăй çитнĕ чухлĕ тӳпе хывакан тепĕр хĕрарăм пирки те каласа хăвармасăр иртме çук. Вăл Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта ачасене ӳкерме вĕрентекен тата черчени предметне алла илме пулăшакан Валентина Борисовна Петрова. Хăй предметне вĕрентнипе пĕрлех ачасене тĕрлĕ конкурссене илсе çӳрессинчен те пăрăнмасть учительница. Акă кăçал кăна республикăра пушар хăрушсăрлăх служби ирттернĕ "Вут-çулăм тата ачасем" конкурса хутшăнса вăл вĕрентекен А.Петрова индивидуаллă ĕçсен номинацийĕнче республикăра 2-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Вĕрентекенпе вĕренекенĕн пĕрлехи ӳсĕмĕ мар-и-ха çакă? Хирĕçлеймĕпĕр.

Çăкăрпа çеç тутă пулаймăн, тет халăхăмăр ăслăлăхĕ. Çак чăнлăха кĕнеке вулама юратакансем уйрăмах лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа та вĕсен тата шкулта вĕренекенсен пурнăçĕнче библиотекăра ĕçлекенсем уйрăм пĕлтерĕшлĕ. Çакна ăнланса юлашки çулсенче çĕршыв та библиотекăсем çине пысăк тимлĕх уйăрма пуçларĕ. Акă ялсенче пĕрин хыççăн теприн тĕслĕх библиотекăсем уçălма пуçларĕç. Ильинка ял библиотеки те çакăнтан аййкинче юлмарĕ: пĕлтĕрхи декабрĕн 15-мĕшĕнче кунта тĕслĕх вулавăш çынсене йыхравлама тытăнчĕ. Кунти ĕççем ял çыннисем ыйтнă пек йĕркеленсе пырасси халĕ йăлтах ăна ертсе пыракан Аэлита Юрьевна Храмоваран килет. Хăйĕн ĕçне чунне парса ĕçлекен библиотекарь тирпейлĕхе те алăран вĕçертмест, вула-



Р. С. Сорокина.

кансемпе те пĕр чĕлхе тупать, район аталанăвĕшĕн çĕннине те çул парсах пырать.

Ăратлă выльăх ĕрчетекен "Свобода" хуçалăх-завод иртнĕ çул пĕтĕмпе 4788 сысна çури илнĕ. Хуçалăхра икĕ сысна ферми. Çатракассинчи сысна ферминче сысна амисем пăхнă çĕрте Елизавета Петровна Донскова чĕрĕк ĕмĕр вăй хурать. Ĕçре пысăк опыт пухнăскер пĕлтĕр вăл пĕтĕмпе 468 çура илме пултарчĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче хуçалăхра тĕпрен илсен хĕрарăмсем вăй хуни тата вĕсем çакăн пек ӳсĕмлĕ ĕçлеме пултарни хуçалăх экономи-



Е. П. Донскова.

кин çĕнĕ аталанăвне çул уçать. Çакăн никĕсĕ пур ĕнтĕ. Пĕлтĕр хуçалăх 3061 пуç сыснана ӳстерсе пĕр пуçне вăтамран 75 килогрампа сутнă. Вăл шутран 882 пуçĕ – ăратлă сыснасем. Вĕсене вăтамран 85 килограма çитерсе сутса хуçалăх 7 миллион тенкĕ укçа тунă. Кăçал та кăтартусем иртнĕ çулхинчен юлсах каймаççĕ. Ăратлăха лайăхлатса пырас енĕпе "Свобода" Мускаври ученăйсемпе тачă çыхăнса ĕçлет. Пĕтĕм Раççейри ăратлăх ĕçĕн наукăпа тĕпчев институчĕн ăсчахĕсем хуçалăхăн тăтăш хănисем. Вĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлесе, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илсе тушкари çу хисепне пĕчĕклетсе, хĕрлĕ аш тухассине пысăклатса Кашмашсемпе Çатракассисем хăйсен умне лартнă тĕллеве пурнăçларĕç: сыснасен пысăк шурă ăратĕнче "Свободовский тип" хăйĕн вырăнне тупрĕ.

"Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт комплексĕнчи 36 çынран тăракан ĕç коллективне 4-мĕш çул ĕнтĕ



Р. А. Блинова.

Раиса Ананьевна Блинова ертсе пырать. 205 сумалли ĕнеллĕ ферма куллен вăтамран 2,5 тонна сĕт парать. Апат пур, производство линийĕсем пĕр кăлтăксăр ĕçлеççĕ, ĕçлекенсем те хăйсен тивĕçне вăхăтра пурнăçланипе палăраççĕ. Çак звеносен килĕшĕвĕ – малтуртăмлă ĕç никĕсĕ. Кăçал çулталăк пуçланнăранпа ултă уйăхра Орининсем пĕтĕмпе 507,7 тонна сĕт (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 118 процент), 136,4 тонна



А. Ю. Храмова.

(140 процент) аш-какай туса илнĕ. Кăтартусене усă куракан 100 гектар çĕр пуçне пăхсан, кунта та Орининсем кайри ретре мар: январь – июнь уйăхĕсенче 275,2 центнер сĕт (пĕлтĕрхипе 118 процент), 73,9 центнер аш-какай (140 процент) туса илме пултарнă. Ку вăл районти вăтам кăтартусенчен самай ӳсĕмлĕрех. Çакăнпа пĕрлех мăйракаллă шултра выльăхсемпе сыснасен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ те ытти нумай хуçалăхсемшĕн тĕслĕх вырăнне: 680 тата 459 грамм. Çак хуçалăх базинче кăçал ĕнесене машинăпа сăвакан операторсен тата техник-осеменаторсен çулленхи ырă йăлана кĕнĕ районти конкурсĕ иртрĕ. Фермăна çак мероприятие ăнăçлă хатĕрленĕшĕн тата производствăна тивĕçлĕ шайра тытса пынишĕн район пуçлăхĕ Ю. Иванов Раиса Ананьевана фермăри Турă кĕтесне вырнаçтарма Владимирти Турă амăш иконне парнелерĕ.

Районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче мал ĕмĕтлĕ çамрăксем те сахал мар. Шăпах вĕсем ĕнтĕ çĕнĕ технологисене аталантаракансем. Ленин ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Шаптак сĕт фермине ĕне сăвакан пулса ĕçлеме пырса кĕнĕренпе Алина Владиславовна Васильеван 5 çул сисĕнмесĕрех хыçа юлчĕ ĕнтĕ. Мал туртăмлă хĕр хушнă ĕçре яланах шанăçлă. Ферма ертӳçи отпуска кайсан ун тивĕçĕсене хăй çине хурсан та пуç усмасть Алина. Йывăрлăхсене çĕнтерсех коллективпа пĕрле пĕр çын пек çĕнĕ ӳсĕмсем патне çĕкленет.

Хĕрарăмсем районти сывлăх хуралĕнче те кайрисен ретĕнче мар. Çакăнта паян пĕтĕмпе 667 ĕçчен вăй хурать, район халăхĕн сывлăхĕшĕн тăрăшать. Вĕсенчен 88 процентне яхăн – хĕрарăмсем. Нумайăшĕ вуншар çул ĕçлесе пуян опыт пухнă медицина ĕçченĕсем. Акă районăн Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ больницинче 15 çул вăй хуракан Светлана Петровна Захарова та ĕç опычĕпе малтисен шутĕнче. Тăрăшулăхне кура çамрăк медсестра нумаях пулмасть терапи уйрăмĕн аслă медицина сестрин тивĕçĕсене пурнăçлама тытăнчĕ. Ăнăçу сунатпăр ăна та, пурне те!

Хĕрарăм пурнăç тыткăчи тесе эпир çуркуннехи пĕрремĕш уявра калатпăр пулсан, пирĕн сăмахсем тĕрĕс пулни пирки эпир паян та иккĕленместпĕр. Хĕрарăмсен ăшă кулли малалла чĕнекен илем пирки никамăн та хирĕçле сăмах çук. Малашне те çаплах пултăрччĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**